27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
ИЮЛЬ
26
ЮНКУН
146 (6641) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН
ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН
ХАÇАЧĔ

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕнче

Чăваш республикинчи районсен, МТС-сен 1944 çулхи çуракине ирттерес тата колхозсенче обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе пынă социализмлă ăмăртăвĕн итогĕсем çинчен

Республикăри районсен, МТС-сен 1944 çулхи çуракине ирттерес тата колхозсенче обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе пынă социализмлă ăмăртăвĕн итогĕсене пăхса тухса, Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ çапла йышăннă:

1. Районсен 1944 çулхи çуракине ирттерес тĕлĕшпе пынă социализмлă ăмăртăвĕнче **Вăрнар районĕ** мала тухнă тесе шутлас. Çав район çураки планне 105,7 процент тултарнă, акасса кĕске срокесенче тата лайăх акса хăварнă. Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн куçса çӳрекен **Хĕрлĕ ялавне** Вăрнар районĕнчех хăварас.

Ĕçре палăрнă агрономсене тата ял хуçалăхĕнчи ытти специалистсене премилеме Вăрнар райисполкомне 8000 тенкĕ укçа парас.

Çуракине ирттерес тĕлĕшпе **Çĕрпӳ, Чурачăк, Красноармейски, Сĕнтĕрвăрри, Муркаш, Элĕк, Калинино** тата **Сĕнтĕр** районĕсем лайăх ĕçленине палăртас.

2. Колхозсенче обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе пыракан социализмлă ăмăртура **Çĕрпӳ районĕ** мала тухнă тесе шутлас. Çав районра 1944 çулхи пилĕк уйăх хушшинче майракаллă шултăра выльăхсен йышĕ 17,7 процент, сыснасен йышĕ 3,8 процент, сурăхсен йышĕ 28,7 процент ӳснĕ. Çĕрпӳ районне Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн куçса çӳрекен **Хĕрлĕ ялавне** парас.

Ĕçре уйрăмах палăрнă зоотехниксемпе ветврачсене тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри ытти специалистсене премилеме Çĕрпӳ райисполкомне 6.000 тенкĕ укçа парас.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе **Чурачăк, Сĕнтĕрвăрри** тата **Октябрьски** районсем лайăх ĕçленине палăртас.

3. Машинно-тракторнăй станцисен çуракинчи социализмлă ăмăртăвĕнче **Шăхасан МТС-ĕ** мала тухнă тесе шутлас. Çав МТС, çуркунне тракторсемпе тумалли ĕçсене кĕске срокесенче тата лайăх пахалăхлăн туса ирттерсе, плана 115 процент тултарнă, кашни 15 лаша вăйлă тракторпа 135,3 гектар сухаланă, 3.900 килограмм горючи перекетленĕ.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн куçса çӳрекен **Хĕрлĕ ялавне** Шăхасан МТС-ĕнчех хăварас.

Ĕçре уйрăмах палăрнă инженерсемпе механиксене тата МТС-ăн ытти работникĕсене премилеме Шăхасан МТС-ĕн директорĕ аллине 4000 тенкĕ укça парас.

Çуракинче **Йĕпреç, Вăрнар, Çĕрпӳ, Красноармейски, Куславкка, Елчĕк, Вăрмар, Тăвай, Чкаловски, Комсомольски** тата Ишлей МТС-ĕсем лайăх ĕçленине палăртас.

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

Чăваш АССР-ĕнчи колхозсен 1944 çулхи çуракине ирттерес тата обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе пынă социализмлă ăмăртăвĕн итогĕсем çинчен

Чăваш АССР-ĕнчи колхозсен 1944 çулхи çуракине ирттерес тата обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе пынă социализмлă ăмăртăвĕн итогĕсене пăхса тухса, Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çапла йышăннă:

1. Колхозсен 1944 çулхи çуракине ирттерес тĕлĕшпе пынă социализмлă ăмăртăвĕнче мала тухнă тесе шутлас:

1) Вăрнар районĕнчи **Сталин ячĕпе тăракан Ленин орденлĕ колхоз,**

2) Елчĕк районĕнчи **Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз,**

3) Улатăр районĕнчи **«Путь Ильича» колхоз,**

4) Муркаш районĕнчи **«Свобода» колхоз,**

5) Тăвай районĕнчи **«Красная Чувашия» колхоз.** Çав колхозсем çуракине кĕске срокесенче тата пахалăхлă тултарнă.

Сӳлерехре кăтартнă колхозсене Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен **Хĕрлĕ ялавĕсене** парас.

2. Колхозсен обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе пыракан социализмлă ăмăртăвĕнче 1944 çулăн пĕрремĕш çур çулĕнче мала тухнă тесе шутлас: Çĕрпӳ районĕнчи **«Ĕмĕт» колхоза**, Сĕнтĕр районĕнчи **«Новый путь» колхоз**, Шăхасан районĕнчи **Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз**, Калинино районĕнчи **«Броневик» колхоз**, Ишлей районĕнчи **Пархинасси колхозĕ.** Çав колхозсем выльăх-чĕрлĕх тата лашасем ĕрчетмелли плана тултарнă.

Сӳлерехре кăтартнă колхозсене Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен **Хĕрлĕ ялавĕсене** парас.

ВЦСПС-ра

ВЦСПС президиумĕ профсоюз организацисене СССР Верховнăй Совет Президиумĕн 1944 çулхи июлĕн 8-мĕшĕнче кăларнă Указĕ ача амăшĕсемпе ачасен пурнăçне малалла лайăхлатас тĕлĕшпе мĕнле пахa пулса тăнине рабочисемпе служащисене ăнлантарса пама тата ача яслисемпе садĕсен хисеппе ӳстерес, кăкăр ачисене ĕмĕртмелли пӳлĕмсем тата хĕрарăмсен гигиена пӳлĕмĕсем тăвас ĕçе активлăн хутшăнма хушнă.

Йывăр çын пулнă хĕрарăмсен ĕç кунĕ çинчен, вĕсене тата кăкăр ĕмĕртекен хĕрарăмсене ĕçкунĕнчен ытла ĕçлеттермелле марри çинчен тата çĕрлехи вăхăтра ĕçлеттерме юраманни çинчен, 8 çулхан иртмен ачасем пур хĕрарăмсене каннин эрнере пĕр кун кантармалли çинчен тата ытти çинчен те калакан законсене пурнăçа кĕртнине профсоюзсен ялан тĕрĕслесе тăмалла.

Профсоюз организацийĕсен йывăр çын пулнă хĕрарăмсене хушса паракан апат-çимĕç паекне, халь икĕ хут ӳстернĕскерне, вăхăтра панине тата лайăх йышши апат-çимĕç панине уйрăмăн тĕрĕслесе тăмалла, ача амăшĕсене тин çуралнă ачасем валли кĕпе-йĕм партарма тата социальнăй страховани укçинчен паракан пособие вăхăтра партарма тăрăшмалла.

ВЦСПС президиумĕ пысăк хуласенче тата Совет Союзĕн промышленность центрĕсенче йывăр çын пулнă хĕрарăмсемпе ача ĕмĕртекен хĕрарăмсем валли хăйне уйрăм кану çурчĕсем уçма йышăннă.

Совет Союзĕ Польша çине мĕнле пăхни çинчен СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕ пĕлтерни

Совет Правительстви СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариатне çакăн пек пĕлтерме хушнă:

Хĕрлĕ Çар, малалла ăнăçлăн куçса пырса, Совет Союзĕпе Польша хушшинчи государство чиккине тухрĕ. Германин каялла чакакан çарĕсене йĕрлесе пырса, совет çарĕсем, Польшăн Совет Союзĕпе Германи фронтĕнче кĕрешекен çарĕпе пĕрле, Западный Буг шывĕ урлă каçрĕç, Совет Союзĕпе Польша чикки урлă каçса, Польша çĕрĕ çине кĕчĕç. Çапла ĕнтĕ нумай хĕн-хур тӳснĕ поляк халăхне нимĕç оккупацийĕнчен ирĕке кăларас ĕç пуçланчĕ.

Совет çарĕсем Польша çĕрĕсем çине пĕр çирĕп ĕмĕтпе кĕчĕç — Германин тăшманла çарĕсене çапса аркатмалла, поляк халăхне нимĕç захватчикĕсен пусмăрĕнчен ирĕке тухас, никама пăхăнман, вăйлă та демократиллĕ Польшăна ура çине тăратас ĕçре пулăшмалла.

Совет Правительстви çакăн çинчен пĕлтерет: Хĕрлĕ Çар Польша территорийĕ çинче туса пыракан вăрçă ĕçĕсене хăй тĕллĕн пурăнакан, туслă та союзлă государствăн территорийĕ çинче пулса пыракан ĕçсем вырăнне хурса хаклать. Çавăнпа та ĕнтĕ Совет Правительстви Польша территорийĕ çинче хăйĕн администраци органĕсене тума шутламасть, çав ĕçе поляк халăхĕн ĕçĕ тесе шутлать. Çавна пула вăл Совет командованийĕпе Польша администрацийĕ хушшинчи çыхăнусем çинчен Польшăна ирĕке кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен Комитетпа килĕшӳ тума йышăнчĕ.

Совет Правительстви çакăн çинчен пĕлтерет: вăл Польша территорийĕн мĕнле те пулин пайне туянас е Польшăри обществăллă строя улăштарас тĕллеве лартмасть, Хĕрлĕ Çар Польша территорийĕ çинче вăрçă ĕçĕсем туса пырасси вăрçă тĕлĕшпе тата туслă поляк халăхне нимĕç оккупацийĕнчен ирĕке тухма пулăшас тĕлĕшпе кăна кирлĕ пулса тăрать.

Совет Правительстви çакна çирĕп шанса тăнине палăртать: ССР Союзĕпе Польшăн тăванла халăхĕсем нимĕç захватчикĕсене хирĕç, ирĕклĕхшĕн пыракан кĕрешӳве вĕçне çитерĕç, Совет Союзĕпе Польшăна пĕрле туслăн ĕçлеме çирĕп никĕс хывса хăварĕç.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ИЮЛĔН 24-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Июлĕн 24-мĕшĕнче ПСКОВ хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, тăшманпа çапăçса, çаплах малалла тапăнса пынă, халăх пурăнакан 60 пункта ытла туртса илнĕ. Вăл шутра — КОРЛЫ, ПОДДУБЬЕ, ВЫЖЛИВО, ЕЛИСЕЕВО, ЗАЙЦЕВО, ГРИБУЛЫ, СТУКАЛАВА, ВИДУЧИ ятлă пысăк ялсем тата ВЕЦУМИ ятлă чугун çул станцийĕ.

СЕБЕЖ хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, тăшманпа çапăçса, малалла куçса пынă, халăх пурăнакан 100 пункта ытла туртса илнĕ. Вăл шутра—БАРАНАВА, ВАЦУНИЭКИ, БИНЕВА, СТОЛЕРОВА, ЛИПУШКИ, ШКРАБИ ятлă пысăк ялсем тата ЗУТРИЗДЕНЕ ятлă чугун çул станцийĕ.

ДВИНСК хули енче пирĕн çарсем, тăшманпа çапăçса, малалла тапăнса пынă, халăх пурăнакан 80 пункта ытла туртса илнĕ. Вăл шутра — КАПЛАВА, ПЛИССЫ, СТРЫНИШКИ, ДУБИНОВО, ТАРТАКА, БОРОВКА, МИКОЛАЮНЦЕ ятлă пысăк ялсем.

ПАНЕВЕЖИС хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре тата кăнтăртарахра пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă, Литва ССР-ĕн уезд центрне УКМЕРГЕ хулипе чугун çул станцине туртса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 150 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра — ВОБОЛЬНИКИ, ДАРШИШКИ, ПРУСЕЛИ, НОВОЕ МЕСТО, ВОЕВОДЗИШКИ, ПОГИРЫ, СЕСИКИ ятлă пысăк ялсем.

БЕЛОСТОК хули енче пирĕн çарсем Белосток облаçĕнчи район центрне СОКОЛКА хулине туртса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан ытти 40 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра—ХОРУЖОВЦЫ, КАРОЛИН, ВОЛКУШ, КАМЕНКА СТАРАЯ, КАМЕНКА (БЕЛОСТОК хулинчен 10 километр кăнтăр-хĕвеланăçнерехре), СТУДЗЯНКИ ятлă пысăк ялсем.

БРЕСТ хули енче пирĕн çарсем, тăшман пехотипе танкĕсен контратакисене сире-сире ярса, тăшманпа çапăçса, çаплах малалла тапăнса пынă, халăх пурăнакан 80 пункта ытла туртса илнĕ. Вăл шутра—РАДЕВИЧИ, ВОЙСКА, ДЕМЯНЧИЦЫ, ЧЕРНОВЧИЦЫ, КОСТОМЛОТЫ, ПИШАЦ, ПОЛОСКИ, ХОТЫЛУВ, КОШОЛЫ, ГУЩА ятлă пысăк ялсем тата ХОТЫЛУВ чугун çул станцийĕ.

БЕЛОРУССИРИ 1-мĕш фронт çарĕсем, ăнăçлă наступление вăйлатса пырса, ЛЮБЛИН хулипе пысăк чугун çул узелне, ЛУКОВ хулипе чугун çул узелне туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 500 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра — ВИШНИЦЕ, ГОРОДЫЩЕ, РАДЧЕ, СМЕЛЯНУВ, РАДЗЬНЬ, БЖЕЖНИЦА-БЫХАВСКА, ОСТРУВ-ЛЮБЕЛЬСКИ, ТАРЛО, РУДКА-КОЗЛОВЕЦКА, ЧЕХУВКА, БЕЛЖИЦЕ, ОСМОЛИЦЕ, ЯБЛОНКА, ПЯСКИ, ПАВЛУВ, СЕЛЕЦ, ЛЕЩАНЫ ятлă пысăк ялсем тата МИЛЯНУВ, ПАРЧЕВ, ГРУДЕК, БЖЕЖНИЦА-БЫХАВСКА, ТАРЛО, БЫСТРИЦА, ДОМИНУВ ятлă чугун çул станцийĕсем. Пирĕн çарсем БРЕСТ хулипе ВАРШАВА хули хушшинчи чугун çула татнă.

ГРУБЕЩУВ хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çаплах ăнăçлă наступлени туса пынă, БИЛГОРАЙ хулине туртса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан ытти 150 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра—ВОЙСЛАВИЦЕ, ГРАБОВЕЦ, ЗАВАЛЮВ, ПЕРЕСПА, ЗУБОВИЦЕ, ВОЖУЧИН, ВЕРЕХАНЕ ятлă пысăк ялсем тата УХАНЕ, ВОЙСЛАВИЦЕ, КОНЮХИ ятлă чугун çул станцийĕсем.

РАВА-РУССКАЯ хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем 80 километр фронт сарлакăшĕпе САН шывĕ çине тухнă, халăх пурăнакан 60 пункта ытла туртса илнĕ. Вăл шутра Львов облаçĕнчи район центрĕсем — СИНЯВА, ЛЯШКИ ДОЛГИЕ, КШЕШУВ, БЫСТРЕ, КУРЫЛУВКА, УХОВ, ПЕНОВИЦЫ ятлă пысăк ялсем. Пирĕн çарсем чылай участокĕнче САН шывĕ урлă каçса кайнă.

ЛЬВОВ хули енче пирĕн çарсем тăшманпа çапăçса малалла тапăнса пынă, Львов облаçĕнчи район центрĕсене ЖОЛКЕВ хулине, ЯВОРОВ хулине, Дрогобыч облаçĕнчи район центрĕсене СУДОВАЯ ВИШНЯ хулипе чугун çул узелне, МОСЦИСКА хулипе чугун çул узелне туртса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 150 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра — ЗАДВУЖЕ, ПОЛОНИЦА, БИЛКА, КРУЛЕВСКАЯ, ГЕРМАНУВ, ГУРОВИЦЫ, ШОЛОМЫЯ, ЧЕРЕПИН ятлă пысăк ялсем тата ПОЛОНИЦА, ЗАДВУЖЕ, ГЕРМАНУВ, НИКОЛАЮВ, СТАРОЕ СЕЛО ятлă чугун çул станцийĕсем. Пирĕн çарсем ЛЬВОВ хулипе ПЕРЕМЫШЛЬ хули хушшинчи чугун çулпа шоссе çулне татнă.

Тĕрĕслесе тухнă даннăйсем тăрăх, тăшманăн БРОДЫ хулинчен хĕвеланăçнерехре кăшăлланă ушкăнне аркатнă чухне пирĕн çарсем 17.175 нимĕç салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ. Тыткăна лекнисем хушшинче нимĕçсен 454-мĕш охраннăй дивизийĕн командирĕ—НЕДВИГ генерал-майор пур.

ЗОЛОЧЕВ хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем Станислав облаçĕнчи район центрне РОГАТИН хулине туртса илнĕ. Днестр шывĕ урлă каçнă та ГАЛИЧ хулипе чугун çул станцине йышăннă.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

Июлĕн 23-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 172 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 26 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Паневежис хулинчен кăнтăртарахра пĕр соединени чаçĕсем ĕнер каçхине Свента шывĕ çине тухнă. Çĕрле совет боецĕсем Свента урлă каçнă та, икĕ енчен пырса çапса, паян ирхине нимĕçсене Укмерге хулинчен хĕссе кăларнă. Туллимар даннăйсем тăрăх, гитлеровецсене пĕр батальон ытла вĕлерсе пĕтернĕ, 4 танкпа хăй тĕллĕн çӳрекен 7 тупă пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Белосток хули енче пирĕн çарсем, тăшманпа çапăçса, Белосток хули патнелле çурçĕртен, хĕвелтухăçĕнчен тата кăнтăрхĕвелтухăçĕнчен куçса пыраççĕ. Пĕр участокра нимĕçсен пехотин икĕ полкĕ, халь çеç Голландирен килсе çитнĕ 19-мĕш танковăй дивизин 50 танкĕ пулăшнипе, пирĕн çарсене флангран пырса çапма хăтланнă. Хаяр çапăçура 800 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă, тăшманăн 37 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. Нимĕçсем ним паллитĕллисĕр каялла чакнă. Пирĕн чаçсем Соколка хулипе шоссе çулĕсен узелне туртса илнĕ. Белосток хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пĕр соединени чаçĕсем 600 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă, 13 йывăр тупă, 500 тонна йĕплĕ пралук тата боеприпассен пысăк складне тытса илнĕ.

* * *

Белоруссири 1-мĕш фронт çарĕсем наступление ăнăçлăн вăйлатса пынă. Ĕнер пирĕн чаçсем Люблин хулине вăркăнса кĕрсе кайнă та тăшманпа хула урамĕсенче çапăçма тытăннă. Паян совет танкисчĕсемпе пехотинецĕсем, нимĕçсем хирĕç тăнине пусарса лартнă та, Люблин хулине пĕтĕмĕшпех йышăннă. Тăшмана питĕ пысăк çухатусем кӳнĕ. Пирĕн пĕр часть кăна 1.400 нимĕç салтакĕпе офицерне вĕлерсе пĕтернĕ тата 600 гитлеровеца ытла тыткă-на илнĕ. Хуларa чи пысăк горючи склачĕсем, техникăпа хĕçпăшал нумай, çар пурлăхĕн эшелонĕсем тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ. Наступлени вăхăтĕнче тăшманăн çĕмĕрсе тăкнă 213 охраннăй дивизийĕн тата 26-мĕш пехотнăй дивизийĕн юлашкисенчен тунă ушкăнсене аркатса тăкнă. Пирĕн Хелм (Холм) хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре наступлени туса пыракан чаçсем, халăх пурăнакан чылай пунктсенче тăшман гарнизонĕсене пĕтерсе тăкнă та, çĕрле Варшава хулинчен 90 километр кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре ларакан Луков хули патне тухнă. Совет боецĕсем, çав тери хăвăрт атакăласа, Луков хулипе чугун çул узелне туртса илнĕ.

* * *

Львов хули енче пирĕн çарсем, хăватлăн пыра-пыра çапса, тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрнĕ те, малалла хăвăрт куçса пырса, Яворов хулине, Дрогобыч облаçĕнчи Судовая Вишня тата Мосциска ятлă район центрĕсене туртса илнĕ, Львов хулипе Перемышль хули хушшинчи чугун çулпа шоссе çулне татнă. 1.500 нимĕç салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ, 40 танк, 50 тупă, тата 30 бронетранспортер тытса илнĕ. Совет боецĕсем Жолкев хулине çавăрса илсе хаяр çапăçура нимĕçсен çав хулари гарнизонне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Золочев хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем чылай вырăнсенче Гнилая Липа шывĕ урлă каçнă. Совет чаçĕсем тăшманăн Гнилая Липа шывĕн хĕвеланăç енчи оборони ăшне савăлланса кĕрсе кайнă, халĕ çав плацдармсене аслăлатасшăн çапăçаççĕ. Перемышляны хули районĕнче совет чаçĕсем нимĕçсен 36 танкне, 30 туппине пĕтерсе тăкнă тата 400 гитлеровеца тыткăна илнĕ.

Хĕрлĕ çар валли çапăçу техники тума

СОВЕТСКОЕ. Чемейри «Сеятель» колхоз членĕсем Хĕрлĕ Çар вăй-хăватне тăтăшах ӳстерсе пырас шухăш-кăмăлпа пурăнаççĕ. Вĕсем хăйсен укçи-тенкине Хĕрлĕ Çар валли çапăçу техники тума 36.000 тенкĕ пухса пачĕç. Н. Андреев 3.000 тенкĕ, С. Яковлев 2.000 тенкĕ, И. Олбутов 2.000 тенкĕ тата ытти колхозниксем те вĕсемпе танах панă.

Килтĕшри Степан Разин ячĕпе тăракан колхозра та çапăçу техники тума 50.000 тенкĕ пухса панă. Ку ĕçре ялти активистсем хăйсем пример кăтартаççĕ.

М. СТЕПАНОВА.

Балтика тăрăхĕнчи 1-мĕш фронт, Белоруссири 1-мĕш, 2-мĕш тата 3-мĕш фронтсен çарĕсем кăçалхи июнĕн 23-мĕшĕпе июлĕн 23-мĕшĕ хушшинче наступлени тунă вăхăтра нимĕçсем тӳснĕ çухатусем тата пирĕн çарсем тытса илнĕ трофейăсем

БАЛТИКА ТАРАХЕНЧИ 1-мĕш фронт çарĕсем кăçалхи июнĕн 23-мĕшĕпе июлĕн 23-мĕшĕ хушшинче наступлени тунă вăхăтра тăшмана çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен çакăн пек çухатусем тӳстернĕ:

ПĔТЕРСЕ ТĂКНĂ: самолетсем — 162, танксемпе хăй тĕллĕн çӳрекен тупăсем—396, тĕрлĕ калибрлă тупăсем — 525, минометсем — 227, пулеметсем—1.444, автомашинăсем — 3.946. Тăшманăн, вилнисене кăна шута илсен те, 56.410 салтакĕпе офицерĕ пĕтнĕ.

Çав вăхăт хушшинчех БАЛТИКА ТАРАХЕНЧИ 1-мĕш фронт çарĕсем çакан пек трофейăсем ТЫТСА ИЛНĔ: танксем—31, тĕрлĕ калибрлă тупăсем—685, минометсем — 194, пулеметсем—1.456, винтовкăсемпе автоматсем — 12.740, автомашинăсем — 3.921, паровозсем — 15, чугун çул вагонĕсемпе платформăсем — 610, лашасем — 969, боеприпас, хĕçпăшал, снаряжени тата апат-çимĕç склачĕсем — 238.

Тăшманăн 8.249 салтакĕпе офицерне ТЫТКĂНА ИЛНĔ.

Çапла ĕнтĕ, БАЛТИКА ТĂРĂХĔНЧИ 1-мĕш фронт çарĕсем пĕр уйăх хушши наступлени тунă вăхăтра нимĕçсем хăйсен çар техникин чи кирлĕ хатĕрĕсемпе çыннисене çакăн чухлĕ çухатнă: вилнисемпе тыткăна лекнисем — 64.659 çын, самолетсем — 162, танксемпе хăй тĕллĕн çӳрекен тупăсем — 427, тĕрлĕ калибрлă тупăсем — 1.210, минометсем — 421, пулеметсем— 2.900, автомашинăсем — 7.867.

* * *

БЕЛОРУССИРИ 3-мĕш фронт çарĕсем кăçалхи июнĕн 23-мĕшĕпе июлĕн 23-мĕшĕ хушшинче наступлени тунă вăхăтра тăшмана çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен çакăн пек çухатусем тӳстернĕ:

ПĔТЕРСЕ ТĂКНĂ: самолетсем — 153, танксемпе хăй тĕллĕн çӳрекен тупăсем — 546, тĕрлĕ калибрлă тупăсем — 1.405, минометсем — 408, пулеметсем — 3.344, автомашинăсем — 8.213. Çапăçу хирĕнче тăшман салтакĕсемпе офицерĕсен 105.000 вилли ытла выртса юлнă.

Çав вăхăт хушшинчех БЕЛОРУССИРИ 3-мĕш фронт çарĕсем çакăн пек трофейăсем ТЫТСА ИЛНĔ: танксемпе хăй тĕллĕн çӳрекен тупăсем — 288, тĕрлĕ калибрлă тупăсем — 1.386, минометсем — 822, пулеметсем — 3.566, винтовкăсемпе автоматсем — 34.382, радиостанцисем — 202, автомашинăсем—9.492, мотоциклсем — 437, тракторсемпе тягачсем — 136, çар хатĕрĕсем тиенĕ лавсем — 2.637, паровозсем — 36, вагонсем — 2.958, лашасем — 6.015, боеприпас, хĕçпăшал, снаряжени тата апат-çимĕç склачĕсем — 504.

Тăшманăн 56.277 салтакĕпе офицерне ТЫТКĂНА ИЛНĔ.

Çапла ĕнтĕ, БЕЛОРУССИРИ 3-мĕш фронт çарĕсем пĕр уйăх хушши наступлени тунă вăхăтра нимĕçсем хăйсен çар техникин чи кирлĕ хатĕрĕсемпе çыннисене çакăн чухлĕ çухатнă: вилнисемпе тыткăна лекнисем—161.277 çын, самолетсем — 153, танксемпе хăй тĕллĕн çӳрекен тупăсем — 834, тĕрлĕ калибрлă тупăсем — 2.791, минометсем — 1.230, пулеметсем — 6.910, автомашинăсем — 17.705.

* * *

БЕЛОРУССИРИ 2-мĕш фронт çарĕсем кăçалхи июнĕн 23-мĕшĕпе июлĕн 23-мĕшĕ хушшинче наступлени тунă вăхăтра тăшмана çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен çакăн пек çухатусем тӳстернĕ:

ПĔТЕРСЕ ТĂКНĂ: самолетсем — 51, танксемпе хăй тĕллĕн çӳрекен тупăсем — 649, тĕрлĕ калибрлă тупăсем—728, минометсем — 726, пулеметсем — 2.255, автомашинăсем — 6.023. Çапăçу хирĕнче тăшман салтакĕсемпе офицерĕсен 100.000 вилли ытла выртса юлнă.

Çав вăхăт хушшинчех БЕЛОРУССИРИ 2-мĕш фронт çарĕсем çакăн пек трофейăсем ТЫТСА ИЛНĔ: танксемпе хăй тĕллĕн çӳрекен тупăсем — 67, тĕрлĕ калибрлă тупăсем — 678, минометсем—673, пулеметсем —1.417, винтовкăсемпе автоматсем — 19.788, автомашинăсем — 7.237, тракторсемпе тягачсем — 361, çар хатĕрĕсем тиенĕ лавсем — 4.202, паровозсем — 11, вагонсем — 521, лашасем — 5.567, боеприпас, хĕçпăшал, снаряжени тата апат-çимĕç склачĕсем — 65.

Тăшманăн 31.718 салтакĕпе офицерне ТЫТКĂНА ИЛНĔ.

Çапла ĕнтĕ, БЕЛОРУССИРИ 2-мĕш фронт çарĕсем пĕр уйăх хушши наступлени тунă вăхăтра нимĕçсем хăйсен çар техникин чи кирлĕ хатĕрĕсемпе çыннисене çакăн чухлĕ çухатнă: вилнисемпе тыткăна лекнисем—131.718, самолетсем — 51, танксемпе хăй тĕллĕн çӳрекен тупăсем — 716, тĕрлĕ калибрлă тупăсем — 1.406, минометсем—1.399, пулеметсем — 3.672, автомашинăсем —13.260.

* * *

БЕЛОРУССИРИ 1-мĕш фронт çарĕсем кăçалхи июнĕн 24-мĕшĕпе июлĕн 23-мĕшĕ хушшинче наступлени тунă вăхăтра тăшмана çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен çакăн пек çухатусем тӳстернĕ:

ПĔТЕРСЕ ТĂКНĂ: самолетсем — 265, танксемпе хăй тĕллĕн çӳрекен тупăсем—408, тĕрлĕ калибрлă тупăсем — 1.463, минометсем — 1.544, пулеметсем — 3.844, автомашинăсем—9.120. Çапăçу хирĕнче тăшман салтакĕсемпе офицерĕсен 120.000 вилли ытла выртса юлнă.

Çав вăхăт хушшинчех БЕЛОРУССИРИ 1-мĕш фронт çарĕсем çакăн пек трофейăсем ТЫТСА ИЛНĔ: танксемпе хăй тĕллĕн çӳрекен тупăсем — 350, тĕрлĕ калибрлă тупăсем — 1.832, минометсем — 1.101, пулеметсем — 5.745, винтовкăсемпе автоматсем — 22.108, радиостанцисем — 393, автомашинăсем — 9.200, тракторсемпе тягачсем — 275, вăрçă хатĕрĕсем тиенĕ лавсем — 5.160, паровозсем — 23, чугун çул вагонĕсем—2.300, лашасем—18.889, боеприпас, хĕçпăшал, снаряжени тата апат-çимĕç склачĕсем — 568.

Тăшманăн 62.236 салтакĕпе офицерне ТЫТКĂНА ИЛНĔ.

Çапла ĕнтĕ, БЕЛОРУССИРИ 1-мĕш фронт çарĕсем 30 кун хушши наступлени тунă вăхăтра нимĕçсем хăйсен çар техникин чи кирлĕ хатĕрĕсемпе çыннисене çакăн чухлĕ çухатнă: вилнисемпе тыткăна лекнисем — 182.236 çын, самолетсем — 265, танксемпе хăй тĕллĕн çӳрекен тупăсем — 758, тĕрлĕ калибрлă тупăсем—3.295, минометсем — 2.645, пулеметсем — 9.589, автомашинăсем — 18.320.

* * *

Июнĕн 23-мĕшĕпе июлĕн 23-мĕшĕ хушшинче ТĂВАТĂ ФРОНТ: БАЛТИКА ТĂРĂХĔНЧИ 1-мĕш фронт, БЕЛОРУССИРИ 1-мĕш, 2-мĕш тата 3-мĕш фронтсем, ПĔРПĔРНЕ ТАЧЧĂН ПУЛĂШСА ПЫРСА НАСТУПЛЕНИ ТУНĂ ВĂХĂТРА ТĂШМАН ÇАРĔСЕН СОВЕТ СОЮЗĔПЕ ГЕРМАНИ ФРОНТĔНЧИ ЦЕНТРАЛЬНĂЙ ГРУППИРОВКИНЕ АРКАТСА ТĂКНĂ, СОВЕТ БЕЛОРУССИН СТОЛИЦИНЕ МИНСК ХУЛИНЕ, СОВЕТ ЛИТВИН СТОЛИЦИНЕ ВИЛЬНЮС ХУЛИНЕ ТАТА ÇАКĂН ПЕК ПĂХА ХУЛАСЕНЕ — ВИТЕБСК, МОГИЛЕВ, ВИЛЕЙКА, БАРАНОВИЧИ, ПИНСК, ПОЛОЦК, ОРША, БОБРУЙСК, БОРИСОВ, ЖЛОБИН, КОВЕЛЬ, ОСИПОВИЧИ, МОЛОДЕЧНО, ГРОДНО, ЛИДА, СЛОНИМ, ВОЛКОВЫСК, ПАНЕВЕЖИС ХУЛИСЕНЕ ИРĔКЕ КĂЛАРНĂ. Çав вăхăтра нимĕçсем хăйсен çар техникин чи кирлĕ хатĕрĕсемпе çыннисене пĕтĕмпе çакăн чухлĕ çухатнă: вилнисем—381.000 салтакпа офицер ытла, самолетсем — 631, танксемпе хăй тĕллĕн çӳрекен тупăсем — 2.735, тĕрлĕ калибрлă тупăсем — 8.702, минометсем—5.695, пулеметсем — 23.071, автомашинăсем — 57.152.

158.480 нимĕç салтакĕпе офицерне ТЫТКĂНА ИЛНĔ, вăл шутра 22 нимĕç генералĕ: инфантери генералĕ ГОЛЛЬВИТЦЕР (53-мĕш армейски корпус командирĕ), генерал-лейтенант ЛЮТЦОВ (35-мĕш армейски корпус командирĕ), инфантери генералĕ ФЕЛЬКЕРС (27-мĕш армейски корпус командирĕ), генерал-лейтенант МЮЛЛЕР (12-мĕш армейски корпус командирĕ), генерал-лейтенант ГОФМЕЙСТЕР (41-мĕш танковăй корпус командирĕ), генерал-лейтенант ХИТТЕР (206-мĕш пехотнăй дивизи командирĕ), генерал-майор МЮЛЛЕР-БЮЛОВ (246-мĕш пехотнăй дивизи командирĕ), генерал-майор МИХАЭЛИС (95-мĕш пехотнăй дивизи командирĕ), генерал-лейтенант ТРАУТ (78-мĕш штурмовой дивизи командирĕ), генерал-майор ТРОВИЦ (57-мĕш пехотнăй дивизи командирĕ), генерал-майор ГИР (383-мĕш пехотнăй дивизи командирĕ), генерал-лейтенант БАМЛЕР (12-мĕш пехотнăй дивизи командирĕ), генерал-майор КОНРАДИ (36-мĕш пехотнăй дивизи командирĕ), генерал-майор КЛЯММТ (260-мĕш пехотнăй дивизи командирĕ), генерал-лейтенант ГЕЙНЕ (6-мĕш пехотнăй дивизи командирĕ), генерал-лейтенант ОКСНЕР (31-мĕш пехотнăй дивизи командирĕ), генерал-майор ЭНГЕЛЬ (45-мĕш пехотнăй дивизи командирĕ), генерал-лейтенант КУРОВСКИЙ (110-мĕш пехотнăй дивизи командирĕ), генерал-майор ШТЕЙНКЕЛЛЕР (60-мĕш моторизованнăй дивизи командирĕ), генерал-майор ЭРДМАНСДОРФ (МОГИЛЕВ хули коменданчĕ), генерал-майор ГАМАН (Бобруйск хули коменданчĕ), генерал-майор ШМИДТ (нимĕçсен 9-мĕш армийĕн инженери службин начальникĕ).

СОВИНФОРМБЮРО.

РЕСПУБЛИКА УЙХИРӖСЕНЧЕ

Партипе правительствӑн постановленийӗ колхозниксене ӗҫре хавхалантарать

КӲКЕҪ, июлӗн 25-мӗшӗ. (Телефонпа). «Чашлавар», «Стрела» колхозсенче ятарласа тунӑ комиссисем пулса ҫитнӗ ыраша суйласа илеҫҫӗ те уйрӑм звеносене вырма валеҫсе параҫҫӗ. Паян «Чашлавар» колхозра 2 гектар, «Стрела» колхозра 2,5 гектар ыраш вырнӑ. Ыраша вырнӑ хыҫҫӑн тӗме хываҫҫӗ, каҫкӳлӗм йӑтса ҫӗмел тӑваҫҫӗ. Ыраш вырма тухнӑ икӗ колхозра та пӗрлешӳллӗ столовӑй тата ача яслисем ӗҫлеме тытӑнчӗҫ.

Кашни звенора хаҫат вулакансемпе агитаторсем каннӑ вӑхӑтпа пӗлсе усӑ кураҫҫӗ. Халӗ вӗсем СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральнӑй Комитечӗн «1944 ҫулта тырпул пухса кӗртесси тата ялхуҫалӑх продукчӗсем хатӗрлесси ҫинчен» йышӑннӑ постановление тӗплӗн ӑнлантарса параҫҫӗ. Тепӗр виҫӗ кунтан ыраш вырма массӑллӑн пуҫӑнаҫҫӗ.

М. НИКИТИН.

* * *

ЭЛЕК, июлӗн 25-мӗшӗ. (Телефонпа). СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральнӑй Комитечӗ «1944 ҫулта тырпул пухса кӗртесси тата ялхуҫалӑх продукчӗсем хатӗрлесси ҫинчен» йышӑннӑ постановлени пичетленнӗ хаҫатсем колхозсене ҫитсенех, пур ҫӗрте те ҫав паха постановление хастарлӑн сӳтсе-явма тытӑнчӗҫ. Агитаторсем ун ҫинчен уйра ӗҫленӗ ҫӗртех колхозниксемпе колхозницӑсене ӑнлантарса параҫҫӗ. Уйхир бригадисемпе звеносенче пулса иртнӗ пухусенче колхозниксем партипе правительствӑн постановленине ырлаҫҫӗ, унта хушнӑ пек ӗҫлеме пулаҫҫӗ.

Анчах та уйрӑм колхозсем ҫак постановление пурнӑҫлас тӗлӗшпе ҫителӗклӗ ӗҫлемеҫҫӗ-ха. «Красный пахарь» колхозра паянхи куна ҫитсе те ҫурласене шӑлламан, жнейкӑсене юсаман, кӗреплеллӗ ҫавасем хатӗрлемен. Бригадир Порфирьев юлташ — эпир иртнӗ ҫул та ҫавасемпе усӑ курман, тесе лӑпланса пурӑнать. Уйра тырӑсем пулса ҫитеҫҫӗ, апла пулин те кунта ӗҫ планӗ туман-ха. Ҫак вӑхӑта ҫитсе те утӑ ҫулса пӗтермен. Колхозниксем хӑйсем валли ҫырма-ҫатрасенче утӑ ҫулаҫҫӗ. Колхоз председателӗ Афанасьев юлташ ӗҫе тивӗҫлӗ пек ертсе пырас вырӑнне 3—4 кун ӗнтӗ Шупашкарта пурӑнать.

«Серп и молот» колхоз та тырӑ вырма хатӗр мар. Икӗ жнейка пур, вӗсене юсаман. Машиновед ҫук. Ут таврашӗсем ҫителӗксӗр. 16 лаша валли пурӗ те 10 урапа кӑна. Ҫӗнӗ тырӑ йышӑнма ампарсем хатӗрлемен.

Х. ЛИСИН.

Республикӑри паллӑ комбайнер Маркиянов Ҫӗрпӳ МТС-ӗн комбайнерне Громова ӑмӑртӑва тухма чӗнет

МАНӐН СӖНӲСЕМПЕ ОБЯЗАТЕЛЬСТВӐСЕМ

Комбайнпа эпӗ 1937 ҫултанпа ӗҫлетӗп. Кашни ҫулах плана ирттерсе тултарнӑ. Комбайнпа ӗҫлеме тытӑннӑ ҫулах эпӗ 180 гектар вырса пухрӑм, юлашки ҫулсенче 500 гектартан та иртсе тултартӑм. Иртнӗ ҫул малтан эпӗ трактор бригадин бригадирӗ пулса ӗҫлерӗм. Манӑн бригада плана 154 процент тултарчӗ, 3 тонна та 600 килограмм горючи перекетлесе хӑварчӗ. Тырпулсем пулса ҫитсен комбайнпа ӗҫлеме тытӑнтӑм, плана 368 процент тултарса 500 килограмм горючи перекетлерӗм.

Мӗнре-ха ман ӗҫри ҫитӗнӗвӗн тӗп сӑлтавӗ? Чӑн малтанах, хӑвна шанса панӑ машинӑна юратас пулать. Кашни «вак» пайсене мӗнле юсанине лайӑх тӗрӗслес пулать. Час пӗтекен пайсене ытларах хатӗрлемелле. Хӑшпӗр комбайнерсем 2—3 масленкӑпа тырӑ пухса пӗтересшӗн. Вӑхӑт пур чухне ӑна ытларах хатӗрлемелле. Касакан пайсене кирлӗ пек йӗркелемелле. Лайӑх йӗркелемесен, вӗсем начар ӗҫлеҫҫӗ тата хӑвӑрт пӗтеҫҫӗ.

Мотор таврашӗнче горючи пыракан тата ҫу сӗрекен вырӑнсене лайӑх тӗрӗслемелле. Трубкӑсене лайӑх ҫыпӑҫтармалла, остойниксем пурте юсавлине яланах асӑрхаса тӑмалла.

Кунсӑр пуҫне, комбайн патӗнче ӗҫлекенсене суйласа илсе ӗҫе вӗрентни пысӑк вырӑн йышӑнать. Шыв, горючи, тырӑ турттаракансем, помощник тата тракторист та машинӑна сан пекех юратчӑр, ӑна пӗр чарӑнмасӑр ӗҫлеттерессишӗн тӑрӑшчӑр. Комбайнер каланине вӑхӑтра тата вӑл хушнӑ пек пурнӑҫласан кӑна ӗҫ ӑнӑҫлӑ пулма пултарать. Машина ӗҫлемен вӑхӑтра ӑна ӗҫе хатӗрлес енӗпе агрегатӑн кашни членӗ ӗҫлемелле. Апат ҫинӗ чухне те машина чарӑнмалла мар, черетпе ҫиес пулать. Апат ҫинӗ вӑхӑтра 1—1,5 гектар вырма пулать, урӑхла каласан, ҫурлапа 15 ҫын пӗр кунта вырнӑ чухлӗ апат ҫинӗ вӑхӑтра вырма пулать. Шыв кӳрсе тӑракансем тӑрӑшса ӗҫленинчен те ӗҫ тухӑҫлӑхӗ нумай ӳсет. Шыва пичкепе турттарса пымалла та каткана тултарса лартмалла. Ик-виҫ витре хатӗрлесе хумалла, комбайн ҫывӑхарсанах шыва хӑвӑрт ямалла. Ҫапла вара 10—15 минута вӑхӑта перекетлеме пулать. Кунне шыв ямашкӑн 15-рен кая мар чарӑнмӑ тивет.

Яланах ҫаврӑнакан, шӑвакан вырӑнсене ӳркенмесӗр ҫу сӗрмелле. Хӑшпӗр чухне хедер полотни ҫинчи планка татӑлса е хӑпӑнса каять. Кантрапа е пралукпа ҫыхса аппаланма кирлӗ мар, тӳрех заклепка тумалла.

Кӑҫал эпӗ комбайнпа 500 гектар пухма, 10 процентран кая мар горючи перекетлеме пулатӑп. Комбайн хатӗр, агрегат таврашӗнче ӗҫлекенсене лайӑх пӗлетӗп. Комбайнпа ӗҫлемелли уйра пӗр ҫумкурӑкӗ те ҫук.

Ӗҫӗн пахалӑхӗ—чи кирли. Тырра тӑкаксӑр вырма сӑмах паратӑп.

Паян-ыран тырӑ вырма пуҫӑнатпӑр. Ман пек ӗҫлеме Ҫӗрпӳ МТС-ӗнчи комбайнера Михаил Захарович Громов юлташа социализмлӑ ӑмӑртӑва чӗнетӗп.

П. МАРКИЯНОВ,
Йӗпреҫ МТС-ӗн комбайнерӗ.

952 гектар ыраш вырнӑ

Республикӑри чылай районсенчи колхозсем ыраш вырма тытӑнчӗҫ. Июлӗн 25-мӗшӗ те Елчӗк районӗ—580 гектар, Шӑхасан районӗ 100 гектар, Пӑрачкав районӗ 100 гектар, Кувакино районӗ 20 гектар ыраш вырнӑ. Пурӗ республикипе 952 гектар ыраш вырнӑ.

Ыраш вырма массӑллӑн тухнӑ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, июлӗн 25-мӗшӗ. (Телефонпа). Районри пур колхозсене те ыраш вырма массӑллӑн тытӑнчӗҫ. Колхозниксемпе колхозницӑсем ыраш вырас ӗҫре пысӑк хастарлӑх кӑтартаҫҫӗ. Именкасри «Малалла» колхоз ӗнерхи кун тӗлнех 20 гектар ыраш вырнӑ. Кунта 2 жнейкӑпа тата 2 лобогрейкӑпа туллин усӑ кураҫҫӗ.

Степан Разин ячӗллӗ колхоз ыраш ҫапма тытӑнчӗ. [illegible] патшалӑха [illegible].

И. ХАТАЕВСКИЙ.

Сулӑсса вырма тытӑнчӗҫ

ЭЛЕК, июлӗн 24-мӗшӗ. (Телефонпа). Колхозсен уйхирӗсенче кӗрхи тырӑсем пиҫсе ҫитеҫҫӗ. Кашни гектартан 14—16 центнер тӗштырӑ пухса илме шанчӑк пур. Районри хӑшпӗр колхозсем сулӑсса ыраш вырма тытӑнчӗҫ. Овражкӑри «Хӑват» тата «Молотов ячӗпе» колхозсем сулӑсса 2-шер гектар ытла ыраш вырнӑ. [illegible]

Вутланти «Большевик», Тӗрмӑшри Молотов, Хирлепри Буденнӑй ячӗпе тӑракан колхозсем те [illegible] сулӑсса вырма тытӑнчӗҫ.

(Хамӑр корр.)

Комсомол райкомӗн пленумӗ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Июлӗн 23-мӗшӗнче ВЛКСМ райкомӗн 12-мӗш пленумӗ пулчӗ. Пленум комсомол организацийӗсен хальхи вӑхӑтри задачисем ҫинчен тата комсомола илес ӗҫ ҫинчен ыйтусене пӑхса тухрӗ. [illegible]

Комсомол организацийӗсен хальхи вӑхӑтри задачисем ҫинчен ВКП(б) райкомӗн секретарӗ Гладков юлташ доклад туса панӑ.

— Комсомол организацийӗсен хальхи вӑхӑтри задачи [illegible] «Малалла», «Красноармеец», «Коминтерн», «Ямурзино», «Свобода», «Большевик» [illegible]

[illegible]

Кӑҫал 6 уйӑх хушшинче 225 ҫамрӑка комсомол ретне илнӗ. [illegible] «Свобода», «Ямурзино», «Комбайн», «Пятилетка» [illegible]

Пленум [illegible]

Польша Нацине ирӗке кӑларас тӗлӗшпе ӗҫлекен Комитет туни

Хелм хулине нимӗҫ оккупанчӗсенчен ирӗке кӑларнӑ хыҫҫӑн унта «Речь посполита» ятлӑ хаҫат тухма тытӑннӑ. Ҫав хаҫатӑн июлӗн 23-мӗшӗнче тухнӑ 1-мӗш номерӗнче ҫакӑн пек документсем пичетлесе кӑларнӑ:

ПОЛЬША НАЦИНЕ ИРӖКЕ КӐЛАРАС ТӖЛӖШПЕ ӖҪЛЕКЕН КОМИТЕТ ТӐВАССИ ҪИНЧЕН ПОЛЬШӐН ХАЛӐХ СОВЕЧӖ КӐЛАРНӐ ДЕКРЕТ

Нимӗҫ захватчикӗсене Польшӑран хӑваласа кӑлармалли татӑклӑ ҫапӑҫусем умӗн халӑхӑн ирӗклӗхшӗн пыракан кӗрешӗве ертсе пыма, халӑхӑн никама пӑхӑнманлӑхне сыхласа хӑварма тата Польша Государствине ҫӗнӗрен йӗркелесе яма Польшӑн Халӑх Совечӗ ӗҫ туса пыракан вӑхӑтлӑх власть — Польша Нацине ирӗке кӑларас тӗлӗшпе ӗҫлекен Комитет тӑвать.

Польша Нацине ирӗке кӑларас тӗлӗшпе ӗҫлекен Комитета ҫаксем кӗреҫҫӗ:

Комитет председателӗ тата ют ҫӗршыв ӗҫӗсен Отделне ертсе пыраканӗ
Эдвард Болеслав ОСУБКА — МОРАВСКИЙ

Председатель заместителӗ тата Ҫӗр ӗҫӗпе Аграрнӑй Реформа Отделне ертсе пыраканӗ
Андрей ВИТОС

Председатель Заместителӗ
Ванда ВАСИЛЕВСКАЯ

Нацииллӗ Оборона Отделне ертсе пыраканӗ
Михаил РОЛЯ—ЖИМЕРСКИЙ генерал-полковник

Нацииллӗ Оборона Отделне ертсе пыраканӗн Заместителӗ
Зигмунд БЕРЛИНГ генерал-лейтенант

Граждӑнла Администраци Отделне ертсе пыраканӗ
Станислав КОТЕК — АГРОШЕВСКИЙ

Халӑх Хуҫалӑхӗпе Финанс Отделне ертсе пыраканӗ
Ян Стефан ГАНЕМАН

Юстици Отделне ертсе пыраканӗ
Ян ЧЕХОВСКИЙ

Обществӑллӑ Хӑрушсӑрлӑх Отделне ертсе пыраканӗ
Станислав РАДКЕВИЧ

Соцобеспечени, Сывлӑха тата Ӗҫе сыхлас тӗлӗшпе ӗҫлекен Отдела ертсе пыраканӗ
Д-р Болеслав ДРОБНЕР

Ҫулйӗрсемпе Ҫыхӑну Отделне ертсе пыраканӗ
Инженер Ян Михаил ГРУБЕЦКИЙ

Вӑрҫӑ тӑкакӗсене витес тӗлӗшпе ӗҫлекен Отдела ертсе пыраканӗ
Д-р Эмиль ЗОММЕРШТЕЙН

Ҫутӗҫ Отделне ертсе пыраканӗ
Д-р Станислав СКШЕШЕВСКИЙ

Культурӑпа Искусство Ӗҫӗсен Отделне ертсе пыраканӗ
Винценты РЖИМОВСКИЙ

Информаципе Пропаганда Отделне ертсе пыраканӗ
Д-р Стефан ЕНДРИХОВСКИЙ.

Польшӑн Халӑх Совечӗ Польша Нацине ирӗке кӑларас тӗлӗшпе ӗҫлекен Комитета хӑй вӑхӑтлӑха ӑҫта вырнаҫмаллине ирӗке кӑларнӑ территорире палӑртма хушрӗ.

Польша Нацине ирӗке кӑларас тӗлӗшпе ӗҫлекен Комитета Польшӑн Халӑх Совечӗ Польшӑра вӑрттӑн ӗҫленӗ деятельсене, фронт линийӗ урлӑ каҫнӑскерсене, ҫавӑн пекех тата Польшӑн ССР Союзӗнче эмиграцире пурӑнакан деятелӗсене кӗртрӗ.

Польша Нацине ирӗке кӑларас тӗлӗшпе ӗҫлекен Комитетӑн пилӗк членӗ нимӗҫсем тытса илнӗ территорире юлнӑ, вӗсем ирӗклӗхшӗн пыракан кӗрешӗве малалла ертсе пыраҫҫӗ тата Польшӑн Халӑх Совечӗпе ҫыхӑну тытса тӑраҫҫӗ.

Польша Нацине ирӗке кӑларас тӗлӗшпе ӗҫлекен Комитетӑн ҫав пилӗк членӗн хушаматне, ӑнланмалла сӑлтавсем пирки, пичет урлӑ пӗлтерме май ҫук.

Польшӑн Халӑх Совечӗ.

Варшава, 1944 ҫулхи июлӗн 21-мӗшӗ.

ПОЛЬША ХАЛӐХНЕ ЧӖНСЕ КӐЛАРНӐ МАНИФЕСТ

Польша Нацине ирӗке кӑларас тӗлӗшпе ӗҫлекен Комитет Польша халӑхне чӗнсе манифест кӑларнӑ.

«Тӑван ҫӗршыв ҫыннисем!—тенӗ, сӑмахран, манифестра. — Ирӗке тухас сехет ҫывхарса ҫитрӗ. Польша ҫарӗ Хӗрлӗ Ҫарпа пӗрле Буг шывӗ урлӑ каҫрӗ. Польша салтакӗ хӑйне ҫуратнӑ ҫӗр ҫинче кӗрешет. Нумай асап тӳснӗ Польша ҫинче каллех шурӑ-хӗрлӗ ялавсем вӗлкӗшеҫҫӗ.

Халӑх Ҫарӗн боецне, ССР Союзӗнчи Польша Ҫарӗн боецӗпе пӗрлешнӗскерне, Польша халӑхӗ саламлать. Вӗсен пӗр тӑшман, пӗр кӗрешӳ, пӗр ялав.

Польша воинӗсем, Тӑван ҫӗршыв мухтавӗшӗн кӗрешме пӗр Командовани ертсе пынипе пӗрлӗхлӗ Польша Ҫарне пӗрлешнӗскерсем, ҫӗнтерӳллӗ Хӗрлӗ Ҫарпа юнашар тӑрса, хӑйсен тӑван ҫӗршывне ирӗке кӑларассишӗн ҫӗнӗ ҫапӑҫусене кайӗҫ.

Вӗсем пӗтӗм Польша урлӑ тухса нимӗҫсене хӑваласа пӗтерсе пырӗҫ, вӗсем ирсӗр пруссаксен столицин — Берлин хулин урамӗсенче Польша ялавӗсем вӗлкӗшме тытӑниччен нимӗҫсене хӑваласа пырӗҫ».

Манифестра Вӑхӑтлӑх Парламента — Польшӑн Халӑх Советне туни ҫинчен, унта демократиллӗ партисен представителӗсем — людовецсем, демократсем, социалистсем, Польшӑри Рабочи Партин тата ытти организацисен членӗсем кӗни ҫинчен пӗлтернӗ.

«Польшӑн Халӑх Совечӗ, кӗрешекен халӑх тунӑскер, — тенӗ манифестра, — Польшӑри влаҫа тытса тӑракан пӗртен-пӗр орган пулса тӑрать.

Лондонра эмиграцире пурӑнакан «правительство» тата унӑн Польшӑри делегатури — хӑйӗн ирӗкӗпе ӗҫлекен, халӑха пӑхӑнман власть, правасӑр власть пулса тӑрать, вӑл 1935 ҫулхи апрельте кӑларнӑ законлӑ мар, фашистла конституци ҫинче таянса тӑрать. Ҫав «правительство» гитлерла оккупантсене хирӗҫ пыракан кӗрешӗве чӑрмав кӳнӗ, вӑл хӑйӗн авантюристла политикине пула, Польшӑна ҫӗнӗ катастрофа патне илсе пырать.

Польшӑна ирӗке кӑларнӑ вӑхӑтра, пирӗнпе союзлӑ Хӗрлӗ Ҫар тата унпа пӗрле Польша Ҫарӗсем хамӑр ҫӗршывран оккупантсене хӑваласа кӑларнӑ вӑхӑтра, влаҫӑн центрти законлӑ органне туса хуни кирлӗ, вӑл орган халӑха татӑклӑнах ирӗке кӑларассишӗн пыракан кӗрешӗве ертсе пымалла.

Ҫавӑнпа та Польшӑн Халӑх Совечӗ — Польша халӑхӗн Вӑхӑтлӑх Парламенчӗ — Польша Нацине ирӗке кӑларас тӗлӗшпе ӗҫлекен Комитет турӗ, вӑл Комитет ӗҫ тӑвакан влаҫӑн законлӑ вӑхӑтлӑх органӗ пулса тӑрать, халӑхӑн ирӗклӗхшӗн пыракан кӗрешӗвне ертсе пырать, Польша Государствин никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн тата ӑна ҫӗнӗрен йӗркелессишӗн кӗрешет».

Малалла манифест Польшӑн тулашри политикин тӗп шухӑшне каласа парать, ҫав политика «демократиллӗ политика пулса тӑрать тата пӗрлешӳллӗ хӑрушсӑрлӑх принципӗсем ҫине таянса тӑрать».

«Польша Нацине ирӗке кӑларас тӗлӗшпе ӗҫлекен Комитет, — тенӗ манифестра, — Польша государствине ҫӗнӗрен туса йӗркелеме тытӑнать тата мӗнпур демократиллӗ ирӗклӗхсем ҫӗнӗрен вӑя кӗни ҫинчен чаплӑн каласа пӗлтерет».

Манифестра Польша Нацине ирӗке кӑларас тӗлӗшпе ӗҫлекен Комитетӑн экономикӑллӑ тата ҫӗрӗҫ программи ҫинчен каласа панӑ.

Юлашкинчен манифест Польша Нацине ирӗке кӑларас тӗлӗшпе ӗҫлекен Комитетӑн тӗп задачисене палӑртса парать:

«Польшӑна ирӗке кӑлармалла, государствӑна ҫӗнӗрен туса йӗркелесе ямалла, вӑрҫа татӑклӑн ҫӗнтериччен туса пымалла, Польша ытти государствӑсем хушшинче хӑйне тивӗҫлӗ вырӑн йышӑнса тӑмалла, аркатса пӗтернӗ ҫӗршыва ура ҫине тӑратма тытӑнмалла».

ПОЛЬШӐН ХАЛӐХ СОВЕЧӖ ССР СОЮЗӖНЧИ ПОЛЬША ҪАРНЕ ХӐЙНЕ ПӐХӐНТАРАССИ ҪИНЧЕН ТАТА ХАЛӐХ ҪАРНЕ ССР СОЮЗӖНЧИ ПОЛЬША ҪАРӖПЕ ПӖРЛЕШТЕРСЕ ПӖРЛӖХЛӖ ПОЛЬША ҪАРӖ ТӐВАССИ ҪИНЧЕН КӐЛАРНӐ

ДЕКРЕТ

Польшӑн Халӑх Совечӗ ҫапла йышӑнать:

1. ССР Союзӗнчи Польша Ҫарӗн верховнӑй влаҫне хамӑр ҫине илес.
2. Халӑх Ҫарне ССР Союзӗнчи Польша Ҫарӗпе пӗрлештерес.
3. Пӗрлештернӗ ҫарсене Польша Ҫарӗ тесе чӗнмелле тӑвас.
4. Польша Ҫарӗн Верховнӑй Командованине тӑвас, унта ҫаксем кӗреҫҫӗ: Главнокомандующи, унӑн икӗ заместителӗ, ҫавӑн пекех тата Командованин икӗ членӗ.
5. Польша Ҫарӗнче генерал званине Верховнӑй Командовани тӑратнӑ тӑрӑх Польшӑн Халӑх Совечӗн Президиумӗ парать, ытти офицерсене звани парас правӑна Польшӑн Халӑх Совечӗн Президиумӗ Верховнӑй Командованине парать.
6. Ҫак декрет Польша ҫарӗн соединенийӗсем, Совет Союзӗпе Германи хушшинчи фронтра кӗрешекенскерсем, оперативнӑй ӗҫре Хӗрлӗ Ҫарӑн Верховнӑй Командованине пӑхӑнса тӑрас йӗркене пӑсмасть.

Варшава, 1944 ҫулхи июлӗн 21-мӗше.

ПОЛЬШӐН ХАЛӐХ СОВЕЧӖ ПОЛЬША ҪАРӖН ВЕРХОВНӐЙ КОМАНДОВАНИНЕ ТӐВАССИ ҪИНЧЕН ЙЫШӐННӐ

ПОСТАНОВЛЕНИ

Польшӑн Халӑх Совечӗ 1944 ҫулхи июлӗн 21-мӗшӗнче Халӑх Ҫарӗпе ССР Союзӗнчи Польша Ҫарне Польшӑн Халӑх Советне пӑхӑнтарасси ҫинчен тата вӗсене пӗрлӗхлӗ «Польша Ҫарӗнче» пӗрлештерес-си ҫинчен йышӑннӑ декрета пурнӑҫа кӗртес майпа, Польшӑн Халӑх Совечӗн Президиумӗ Польша Ҫарӗсен Главнокомандующийӗ пулма гр. Михаил Роля-Жимерский генерал-полковника уйӑрса лартать, унӑн заместителӗсем пулма Зигмунд Берлинг генерал-лейтенанта тата Александр Завадский генерал-майора, Командовани членӗсем пулма Мариан Спыхальский полковника тата Ян Чеховский гражданина уйӑрса лартать.

ПОЛЬШӐН ХАЛӐХ СОВЕЧӖ ССР СОЮЗӖНЧИ ПОЛЬША ПАТРИОЧӖСЕМПЕ ПОЛЬША ҪАРӖН СОЮЗНЕ ХӐЙНЕ ПӐХӐНТАРАССИ ҪИНЧЕН ЙЫШӐННӐ

ПОСТАНОВЛЕНИ

Польшӑн Халӑх Совечӗ, Польша халӑхӗн пӗртен-пӗр правомочнӑй представителӗ пулса тӑрса, Польшӑна ирӗке кӑларассишӗн пыракан пур ӗҫсене те пӗтӗҫтерсе таҫта ертсе пыма тивӗҫлӗ, ҫавӑнпа та вӑл ССР Союзӗнчи Польша патриочӗсен Союзне тата ССР Союзӗнчи ӑна пӑхӑнса тӑракан Польша Ҫарне ертсе пырас ӗҫе хӑй ҫине йышӑнать.

Польшӑн Халӑх Совечӗ Польша патриочӗсен Союзне ССР Союзӗнчи поляксен культурӑллӑ ыйтӑвӗсене тивӗҫтерес тата вӗсене социальнӑй пулӑшу парас ӗҫе малашне те туса пыма хушать.

Ҫӗнӗ вӗренӳ ҫулӗ умӗн

КУСЛАВККА.

Варасӑрти ҫичӗ ҫул вӗренмелли шкул (директорӗ Терентьев) ҫӗнӗ вӗренӳ ҫулне пур енӗпе те хатӗрленсе ҫитрӗ. Хӗл каҫма 110 кубометр вутӑ хатӗрленӗ, партӑсене, класреенчи доскасене тата ҫӗмрӗк чӳречесене юсанӑ. Шкул ачисем валли 215 кӗнеке илнӗ.

Вӗренӳ ҫулне хатӗрленме учительсен коллективне ялсовет исполкомӗпе колхоз чылай пулӑшрӗҫ.

Шкулӑн 2 гектар ҫӗр участокӗ пур. Унта кӑҫал ҫӗрулми, купӑста, помидор, хӑяр тата ытти те лартнӑ. Ҫак участок ҫинче шкул ачисем звенопа ӗҫлеҫҫӗ. Халӗ вӗсем ҫӗрулми ҫумласа купаларӗҫ. Ҫак ӗҫре уйрӑмах 5-мӗш класра вӗренекенсем тӑрӑшса ӗҫлерӗҫ.

Вӗренӳ ҫулӗ пуҫлансан, шкул участокӗ ҫинче туса илнӗ пахча-ҫимӗҫпе ачасене валли вӗри апат пӗҫерӗҫҫӗ.

И. ШАРКОВ.

Германири кӗрешӳ малалла пырать

(ТАСС-ӑн Европӑри ӗҫсене пӑхса тӑраканӗ ҫырнӑ статьяран)

Тӗрлӗ ҫӗртен килекен хыпарсем Германири шалти политикӑллӑ лару-тӑру ҫаплах ҫивӗч тӑнине кӑтартаҫҫӗ. Гитлера вӗлерме тапӑннӑ хыҫҫӑн пулса иртнӗ событисем татах та татах ҫакна ҫирӗплетсе параҫҫӗ: Германи генералӗсем гитлерла режима хирӗҫ тунӑ каварлашу ҫӗршывӑн тӗрлӗ социаллӑ сийӗсене питех те шала кӗрсе кайнӑ.

Германири лару-тӑрӑва питӗ асӑрханса хакласан та ҫакӑн пек пӗтӗҫтерсе калама пулать: Гитлерӑн официальнӑй пропаганди, Германири каварлашӑва пусарса лартнӑ тесе, мухтанса пӗлтерет пулин те, каварлашу халлӗхе пӗтмен-ха. Ҫав каварлашӑва ҫарти офицерсем кӑна мар хутшӑннӑ. Юнайтед пресс агентствин Базельти корреспонденчӗ пӗлтернӗ тӑрӑх, Гитлера вӗлерме тапӑннӑ хыҫҫӑн СС отрячӗсем темиҫе пин ҫынна арестленӗ. Нимӗҫ ҫарӗн «Атлантик» ятлӑ вӑрттӑн радиопередатчикӗ ҫакна ҫирӗплетсе парать: Германи ҫарӗн генеральнӑй штабӗн начальникӗ пулма халӗ кӑна лартнӑ Гудериан генерал-полковник «ҫарти командирсен составне тасатас тӗлӗшпе анлӑ ӗҫсем туса ирттернӗ. Нумай офицерсене командирсен вырӑнӗсенчен кӑларнӑ. Офицерсене улӑштарасси пур гарнизонсенче те пулса пырать». Германин «шалти ҫарӗн» главнокомандующийӗ обер-палач Гиммлер хӑй енчен «штабсенчи чылай офицерсене вырӑнтан кӑларса, вӗсен вырӑнне СС ҫарӗсен офицерӗсене лартнӑ». Гиммлерӑн полици отрячӗсемпе эсэсовецсем пӗтӗм Германийӗпех нумай ҫынсене, вӗсем гитлерла правительствӑна хирӗҫ каварлашӑва хутшӑннӑ тесе, арестлеҫҫӗ. Резерври ҫарӑн командующийӗ пулнӑ Фромм генерал-полковника Шхандау крепоҫне илсе кайса, унта персе пӑрахнӑ. Браухич генерал-фельдмаршалпа Гальдер генерал-полковникӑн тата Гитлера хирӗҫле каварлашӑва пуҫаракан ытти ҫынсен пурнӑҫӗ пирки нимӗнле хыпар та ҫук.

Америкӑри Ассошиэйтед пресс агентствин Бернри корреспонденчӗ пӗлтернӗ хыпарсем тӑрӑх, ҫартан хӑваласа кӑларнӑ Германи офицерӗсен шутне Лист тата Фон-Манштейн фельдмаршалсем те лекнӗ.

Гитлера хирӗҫле каварлашӑва хутшӑннисен кӗрешӗвӗ малалла пулса пынине Штутгарт, Швейнфурт, Бремен хулисенче пулса иртекен хумханусем пирки Швейцарирен килекен хыпарсем те ҫирӗплетсе параҫҫӗ. Ҫав хыпарсене Лондонри радиостанцисем пӗлтереҫҫӗ. Германин Мадридри посольствине ҫывӑх тӑракан ҫынсен ушкӑнӗнчен ҫакӑн пек хыпарсем килеҫҫӗ: нимӗҫсен регулярнӑй ҫарӗсем Германи кӑнтӑр пайӗнче эсэсовецсемпе тытӑҫма пуҫланӑ.

Германири шалти политикӑллӑ кӗрешӳ малалла пулса пынине ҫавӑн пекех тата Германипе ют ҫӗршывсем хушшинчи ҫыхӑну татӑлни те кӑтартса парать.

Гитлера хирӗҫле каварлашӑва ертсе пыракансене Гитлер влаҫӗсем пурне те арестленӗ тесе, Германин официальнӑй органӗсем пӗлтернине ниепле те ӗненме май ҫук. Британин радиовещани корпорацийӗн Стокгольмри корреспонденчӗ ҫапла пӗлтерет: унта илнӗ тӗрӗс хыпарсем тӑрӑх, «Германири оппозици лидерӗсем хӑрушлӑхсӑр ҫӗрте пурӑнаҫҫӗ».

Ҫапла ӗнтӗ, тӗрлӗ ҫӗртен килекен хыпарсем ҫакна ӗнентереҫҫӗ: фашистла режима хирӗҫ пуҫланса кайнӑ юхӑма гитлерла пуҫлӑхсем пусарса лартма пултарайман-ха. Анчах Гитлер тата унпа пӗр майлисем, Гиммлерӑн «шалти ҫарӗнчи» эсэсовецсен террорӗпе, Штумпф генерал-полковникӑн полици авиацийӗпе тата ытти майсемпе усӑ курса, каварлашӑва паянхиран пусарса лартма пултарсан та, пурпӗрех, Гитлер режимне хирӗҫ пыракан юхӑма ҫав тери пысӑк вӑйсем хутшӑннине пула, Гитлер режимпе хирӗҫ ҫӗнӗрен ҫав тери хӑватлӑ пӑлхав ҫӗкленӗ, ҫакӑ вара Гитлер ҫарӗпе Гитлер государстви арканса каяссине хӑвӑртрах ҫывхартӗ.

Н. БОДРОВ.

Ҫурҫӗр Францири вӑрҫӑ ӗҫӗсем

ЛОНДОН, июлӗн 23-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, союзниксен экспедициллӗ вӑйӗсен верховнӑй командованийӗн штабӗ паян каҫхине пичетлесе кӑларнӑ пӗлтерӳре ҫапла каланӑ:

Кан хулинчен хӗвелтухӑҫнерехре союзниксен ҫарӗсем тӑшмана Эмивиль ялӗнчен хӑваласа кӑларнӑ. Хӗвеланӑҫ секторӗнче Мальто районӗпе Сев ҫывӑхӗнче, ӗнер пирӗн ҫарсем малалла куҫнӑ вырӑнта, тӑшман контратакӑсем тунӑ, унӑн контратакисене пурне те сирсе янӑ. Паян ирхине вӑтам тата ҫӑмӑл бомбардировщиксем ҫапӑҫусен районне пыракан ҫулсем ҫинчи 6 чугун ҫул объектне атакӑланӑ. Ирхине ирех пирӗн бомбардировщиксем тӑшманӑн Руанри, Веерзонри ҫулйӗрӗсене, ҫавӑн пекех тата Сена шывӗ урлӑ хывнӑ кӗперсене нумайӗшне пыра-пыра ҫапнӑ.

* * *

ЛОНДОН, июлӗн 24-мӗшӗ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллӗ вӑйӗсен верховнӑй командованийӗн штабӗ июлӗн 24-мӗшӗнче ирхине пичетлесе кӑларнӑ пӗлтерӳре ҫапла каланӑ:

Сев шывӗнчен кӑнтӑртарахра, Эскерен ҫурҫӗртерехри районра тата Орн шывӗ ҫинче, Мальторан кӑнтӑртарахра, тӗллӗн-тӗллӗн хаярран ҫапӑҫнӑ. Пӗтӗмӗшпе илсен, пирӗн малти позицисем улшӑнман.

Июлӗн 23-мӗшенче пирӗн авиаци тӑшманӑн снабжени тӑратакан ҫулӗсене тата Парижран ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехри аэродромӗсене пыра-пыра тапӑннӑ. Нормандире тип ҫӗр ҫинче ҫапӑҫакан чӑссене вӑйлӑн пулӑшса тӑнӑ. Июлӗн 24-мӗшӗ ыран тенӗ чух ҫӗрле йывӑр бомбардировщиксем Сен-Назер ҫывӑхӗнче ларакан Донж хулинчи нефтехранилищӗне атакӑланӑ.

Италири вӑрҫӑ ӗҫӗсем

ЛОНДОН, июлӗн 24-мӗшӗ. (ТАСС) Союзниксен Италири ҫарӗсен штабӗ ҫапла пӗлтерет: 5-мӗш армири американецсен чӑсӗсем Тиррен тинӗсӗ хӗрринчи Марина-ди-Пиза хули патне ҫитнӗ, Арно шывӗн кӑнтӑр хӗрринче, унӑн вӑрринчен тытӑнса Флоренци хулинчен 20 мильӑра ларакан пункта ҫитиччен лайӑх ҫирӗпленсе ларнӑ. Марина-ди-Пиза — Пиза хулин Арно шывӗ вӑрринчи порчӗ пулса тӑрать, вӑл ҫав хуларан 12 километрта ларать. Поджибонси хулинчен ҫурҫӗртерехре союзниксен ҫарӗсем ҫӗнӗрен малалла куҫнӑ, халӗ вӗсем Флоренци хулине ҫитесси 19 километр та юлман. Ареццо хулинчен хӗвеланӑҫнерехре 8-мӗш армири акӑлчансен чӑсӗсем Арно шывӗнчен ҫурҫӗртерехре самаях малалла куҫнӑ, Терранова хулине туртса илнӗ. Тибр шывӗн улӑхӗнче 8-мӗш арми чӑсӗсем Тибр шывӗн икӗ хӗррипе те малалла куҫнӑ, халӗ вӗсем ҫулйӗрсен. Сансеполькро ятлӑ паха узелӗ патне ҫитесси 8 километр та юлман.

Союзниксен авиацийӗ тӑшманӑн Италири, Бератри (Албани), Югославири объекчӗсене атакӑланӑ. Иртнӗ ҫӗр йывӑр бомбардировщиксем Бухарест районӗнчи вӑрҫӑ объекчӗсене тапӑннӑ.

Союзниксен авиацийӗн ӗҫӗсем

КИЛЬ ХУЛИПЕ БЕРЛИН ХУЛИНЕ ТАПӐННИ

ЛОНДОН, июлӗн 24-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви ҫапла пӗлтерет: июлӗн 24-мӗшӗ ыран тенӗ чух ҫӗрле бомбардировщиксен питех те пысӑк соединенийӗсем Киль хулине ҫав тери хаярран тапӑннӑ. «Москито» йышши бомбардировщиксем Берлина тапӑннӑ. Бомбардировщиксен ытти эскадрильисем ҫурҫӗр Францире самолет-снарядсен базисене атакӑланӑ.

Рейтер агентствин тепӗр пӗлтерӗвӗнче ҫапла каланӑ: июлӗн 23-мӗшӗнче каҫхине Америка авиацийӗ нимӗҫсен Париж районӗнчи аэродромӗсене атакӑланӑ.

САМОЛЕТ-СНАРЯДСЕМ АНГЛИ ҪИЙӖНЧЕ

ЛОНДОН, июлӗн 24-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, июлӗн 24-мӗшӗ ыран тенӗ чух ҫӗрле Англин кӑнтӑрти графствисем ҫине, вӑл шутра Лондон районӗ те кӗрет, самолет-снарядсем пырса тухнӑ. Сиен тунӑ, вилнисемпе аманнисем пур.

Финляндири лару-тӑру

СТОКГОЛЬМ, июлӗн 24-мӗшӗ. (ТАСС). Швеци хаҫат-журналӗсем пӗлтернӗ тӑрӑх, Швецие тарса килнӗ ҫынсен хисепӗ кунӗсемӗн ӳссе пырать. Або хулинчен тарса килнӗ финсем каласа кӑтартнӑ тӑрӑх, Финляндин хальхи правительствин политикипе килӗшмен пирки халӑх Финляндирен Швецие ҫав тери йышлӑн тарса килет. Финляндин хальхи правительствин политикипе халӑх килӗшменни ҫакӑнтан та лайӑх курӑнса тӑрать: диверсисем, саботажсем тата ыттисем те Финляндире вӑйлансах пыраҫҫӗ. Нумаях пулмасть Або хулипе Торнала хули хушшинчи Куриу станцийӗнче чугун ҫул линине сирпӗнтерсе янӑ. Юлашки вӑхӑтра ҫавӑн пекех тата рабочисем забастовкӑсем туни те пулнӑ.

Тарса килнӗ финсем каласа панӑ тӑрӑх, Финляндире «вӑрман гвардийӗ» кӗрешет. «Вӑрман гвардийӗ» Финлянди ҫарӗнчен тарнӑ салтаксенчен тӑрать. «Вӑрман гвардийӗнчи» салтаксен хисепӗ тӑтӑшах ӳссе пырать.

БОЛГАРСЕН «ЗОРА» ХАҪАЧӖН РЕДАКТОРНЕ ВӖЛЕРМЕ ТАПӐННИ

СТАМБУЛ, июлӗн 24-мӗшӗ. (ТАСС). Кунта болгарсен Гитлер майлӑ ӗҫлекен «Зора» ятлӑ хаҫачӗн редакторне вӗлерме тапӑнни ҫинчен калакан хыпарсем илнӗ. Ӑна Болгари патриочӗсем тапӑннӑ пуль тесе шутлаҫҫӗ.

Лӑпкӑ океан ҫинчи вӑрҫӑ

АМЕРИКА ҪАРӖСЕМ ТИНИАН УТРАВӖ ҪИНЕ АННИ

ВАШИНГТОН, июлӗн 24-мӗшӗ. (ТАСС). США тинӗс министерстви ҫапла пӗлтернӗ: июлӗн 23-мӗшӗнче американецсен тинӗс пехотин 2-мӗшпе 4-мӗш дивизийӗсем Сайпан утравӗнчен кӑнтӑртарахри Тиниан утравӗ ҫине (Марнан утравӗсем) аннӑ. Ҫав дивизисене утрав ҫине анма авианосецсем ҫинчен тата тип ҫӗр ҫинчи аэродромсем ҫинчен вӗҫсе улӑхнӑ авиаци пулӑшнӑ, карапсем ҫинчи артиллери персе хӳтӗлесе тӑнӑ. Утрав ҫине аннӑ хыҫҫӑн американецсен ҫарӗсем японецсемпе ҫапӑҫма тытӑннӑ, вӗсем тӑшман начар хирӗҫ тӑнине ҫӗнтерсе пыраҫҫӗ.

АМЕРИКА ҪАРӖСЕМ ГУАМ УТРАВӖ ҪИНЕ АННИ ҪИНЧЕН ЯПОНИ ПӖЛТЕРНИ

ТОКИО, июлӗн 22-мӗшӗ. (ТАСС). Домей Цусин агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, паян Япони императорски ставки ҫапла пӗлтернӗ: июлӗн 21-мӗшӗнче ирхине американецсен икӗ дивизи чухлӗ ҫарӗсем Гуам утравӗн хӗвеланӑҫ пайӗнче десант антарма пуҫларӗҫ. Японецсен утрав ҫинчи гарнизонӗ американецсемпе ҫапӑҫма тытӑннӑ, ҫав ҫапӑҫу халӗ те пырать-ха.

Ответлӑ редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Росглаввинон Шупашкарти эрех комбиначӗ халӑхран тата сельпосемпе колхозсенчен тӗрлӗ ҫырла, панулми (садра е вӑрманта ҫитӗнни) тата пилеш йышӑнать. Ҫавӑн пек сад ҫимӗҫӗсем паракансене 40 градуслӑ эрех, промтоварсем тата премӗк конфет йышши тутлӑ ҫимӗҫсем параҫҫӗ.

Адрессем: 1) г. Чебоксары, ул. Коммунальная слобода, 21.
2) г. Марпосад, Винпром.
3) г. Алатырь, Росглаввино.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР

Июлӗн 26-мӗшӗпе 27-мӗшӗнче

«ЧЕЛОВЕК С РУЖЬЕМ»

ятлӑ илемлӗ, саслӑ фильм кӑтартать.

Сеанссем ҫак вӑхӑтра пуҫланаҫҫӗ: 12, 14, 16, 18, 20, 22 сехетре.

ЧАСАХ

американецсен илемлӗ, темиҫе сӑрпа ӳкернӗ ҫӗнӗ фильмне

«ДЖУНГЛИ»

кӑтартма пуҫлаҫҫӗ.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн — 0— 67, заместительпе секретарӗн — 4—26, парти пурнӑҫ пайӗн — 3—99, промышленноҫпа ялхуҫалӑх пайӗсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00280 Типографи №1. Управлени полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. 6. 59Х42 п. д. Тираж 14.400 экз.